Муркаш округĕн территори пайĕсен ĕçĕ-хĕлĕ

# Оринин территори пайĕ

***Оринин, Лапкас, Çĕньял Оринин, Чамăш, Патаккасси, Вăрманкасси, Лантăш, Пăсăрман, Пиккикасси, Мулкачкасси, Тереç, Çеменкасси, Атапай, Сентимĕр ялĕсем.***

# Çыннисем пуçаруллă, пуçлăхĕ хастар



**Орининсем кăçал Çимĕк уявне савăнăçлăн паллă турĕ.**



**Масарсем çинче субботниксем ирттересси йăлара. Çамрăк волонтерсем те çак ĕçрен айккинче юлмаççĕ.**



**Çеменкасси ялĕ патĕнчи масар çине каймалли çула пĕлтĕр депутатсен округ Пухăвĕн депутачĕ Павел Вязов спонсорла пулăшу шучĕпе туса панă.**



**Атапайри Новая тата Адабайская урам çулĕсене кăçал çул-йĕр фончĕ шучĕпе юсанă.**



**Чамăшсен халĕ çĕнĕ шыв башни. Ăна республика программипе хута яма май килнĕ.**

Çапла калас килет Муркаш муниципалитет округĕн Оринин территори пайĕнче пулса курнă хыççăн. Шăпах çак енсем пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ те ĕнтĕ хальхи вăхăтра ял çыннисен пурнăçне лайăхлатса пырассипе, вĕсен кулленхи ыйтăвĕсене ăнăçлăрах татса парассипе. Территори пайне кĕрекен 14 ялта вара ыйтăвĕсем те çителĕклех пулни иккĕлентермест.

Вырăнсенче ирттерекен тĕл пулусене хутшăннă май, çынсене икĕ ушкăна уйăрма пулать. Пĕрисем ыйтма çав тери лайăх хăнăхса çитнĕ: пирĕн ку çук, çавна туса памалла, кам пулăшĕ, ыйтăва хăçан татса параççĕ е ытти те. Теприсем вара ытларах хăйсем çине шанма тăрăшаççĕ, тĕрлĕ çул-йĕр шыраççĕ, ыйтăвĕсене те пĕрле татса параççĕ. Оринин тăрăхĕнче пурăнакансем те çавăн пеккисен шутĕнче.

Хальхи вăхăтра ял пурнăçне хăтлăрах те меллĕрех тăвассипе, ялти инфраструктурăна аталантарассипе республика шайĕнче тĕрлĕрен программа сахал мар. Паллă ĕнтĕ, кĕтсе ларнипе пулмасть. Кун пек программăсене хутшăнма ĕç хучĕсем хатĕрлессипе, конкурссене хутшăнассипе сахал мар хăшкăлма тивет. Апла пулин те çакăн усси те куçкĕрет. Самай расхутлă ĕçсене чиперех пурнăçлама май килет.

Орининсем акă 2021 çултах хушса финансласси шучĕпе территорисене хăтлăлатса илемлетессипе республика программине хутшăнса харăсах 8 объектра пĕтĕмĕшле 7,7 млн тенкĕлĕх ĕçсем туса ирттерме пултарнă.

Республикăра шыв уçламалли башньăсене тĕпрен юсассипе Строительство министерствин ятарлă программи вăйра. Кашни çулах унта хутшăнса Оринин тăрăхĕнчи ялсенче башньăсене çĕнетме тăрăшаççĕ. Кăçал та çапла майпа Вăрманкассинчи, Чамăшри, Мулкачкассинчи Центральная урамри шыв башнисене улăштарма май çитернĕ.

Территорири 14 ялта йĕркеллĕ çулсăр урамсем те çук мар-ха. Пуррисене те юсасах тăрас пулать. Çапла вара çул-йĕр фончĕ шучĕпе кăçал Атапай ялĕнчи Новая тата Адабайская урамсенчи çулсене юсама пултарнă.

Вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене кая хăвармасăр татса парассипе республикăн пуçарулăх бюджечĕн программи кунта анлă çул тупнă темелле. Пĕлтĕр асăннă программăна хутшăнса Сентимĕр ялĕнче çул юсассипе калăпăшлă ĕçсем туса ирттернĕ, ĕçсене 6 млн ытла тенкĕлĕх пурнăçланă.

Ял çыннишĕн шыв ыйтăвĕ пĕлтерĕшли куçкĕрет. Çавна май пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе кăçал ĕçе кĕртекен объектсем пурте ялсенчи шыв сечĕсене юсассипе çыхăннисем. Объекчĕсем вара харăсах тăваттă. Тĕрĕссипе объектсенче ĕçсем вĕçленнĕ ĕнтĕ, хăшне-пĕрне йышăнасси кăна юлнă.

Акă Тереç ялĕнче пурăнакансем хăйсен ялĕнчи шыв пăрăхĕсене улăштарнă. Юсав ĕçĕсене «Строительная компания «ПЛАТИНУМ» чикĕллĕ яваплăхлă общество контрактпа 2 млн тенкĕлĕхе яхăн туса ирттернĕ.

Патаккасси ялĕнче пурăнакансем те шыв ыйтăвне татса панă темелле. Кунта ĕçсене «АЛЬЯНССТРОЙГРУП» ООО пурнăçланă. Ĕçсен калăпăшĕ 2 млн та 300 пин тенкĕлĕхе яхăн.

Чамăш ялĕнче кăçал шыв уçламалли башньăна республика программине хутшăнса çĕнетме май килнĕ пулсан, ялти шыв пăрăхĕсене çынсем хăйсем хутшăннипе юсас тенĕ. Шутланă – тунă. Халĕ ĕнтĕ шыв башни те, шыв пăрăхĕсем те йĕркеллĕ. Апла пулсан малашнехи çулсенче çынсене ĕçмелли шыв ыйтăвĕ канăçсăрлантармалла мар.

Лапкас ялĕнче те халĕ шыв пăрăхĕсем çĕнĕ. Çынсем пăрăхсене хăйсем хутшăннипе пуçарулăх бюджечĕн программипе çĕнетме кăмăл тунă. 2 млн та 100 пин тенкĕлĕх ытла ĕçсене «СК «ХАСТАР» ООО туса ирттернĕ.

Сăмах май, пуçарулăх мелĕпе çитес çул пурнăça кĕртме республика конкурс тĕрĕслевĕ витĕр тухнă 3 проект хатĕр ĕнтĕ. Вĕсен проектпа смета документацийĕ хатĕр. Татах тепĕр 3 проект хатĕрлесе çитерме те шанăç пур. Апла пулсан хăтлăх ĕçĕсем çитес çул та ялсенче анлăн пулса пырĕç.

Çитес çулсенчи тĕллевсем шутĕнчех территорири плотинăсене, ытти гидротехника сооруженийĕсене юсаса йĕркене кĕртесси те. Ку тĕллевсем те пурнăçланаççех тесе шанас килет. Мĕншĕн тесен ку тăрăхра пурăнакансем туса парасса кĕтсе ларма хăнăхман, хăйсем пуçаруллă.

Территорири ялсенче тасалăх, тирпейлĕх ыйтăвĕсене яланах тимлĕхре тытма тăрăшаççĕ. Субботниксем ирттерессине манăçа кăлармаççĕ.

Ял старостисем хальхи вăхăтра пысăк вăй пулса тăраççĕ. Ытларах чухне ял çыннисемпе тӳрĕ çыхăну вĕсем урлă пулса пырать. Территори пайĕн пуçлăхĕ палăртнă тăрăх, старостăсем пулма активлă, пуçаруллă çынсене суйланă. Ытларахăшĕ вара çамрăксем. Чи хастаррисен шутĕнче Валентина Пушкова Атапай ялĕн старостине Сергей Колбасова, Мулкачкасси ялĕн старостине Павел Иванова, Чамăш ялĕн старостине Андрей Артемьева асăнчĕ.



Оринин тăрăхĕ тесен, кунта спорт ĕçне-хĕлне çӳллĕ шайра йĕркелесе пынине асăнмасăр ниепле те май çук. Район шайĕнче асăннă территори пайĕн спорт командисем хутшăнмасăр пĕр ăмăрту та иртмест темелле. Çитĕнĕвĕсем те курăмлă. Çакна Валентина Юрьевнăн ĕç пӳлĕмне кĕрсен те курмасăр пултараймастăн. Вуншар кубок, диплом, Хисеп грамоти, Тав хучĕ. Кунпа пĕрлех вырăнта ирттерекен йăлана кĕнĕ ăмăртусем те çук мар, вĕсем те çӳллĕ шайра иртеççĕ.

Территорири ветерансен тата пенсионерсен канашĕсем активлăх кăтартаççĕ. Вĕсене Валерий Вязов тата Виталий Иванов ертсе пыраççĕ. Ветерансем хушшинче тĕрлĕ мероприяти сахал мар иртет: йĕлтĕр эстафети, спорт фестивалĕ, шашка тата шахмат ăмăртăвĕсем т. ыт. те. Ватă çынсен кунне уявласси, юбилярсене, мăшăрсене чысласси йăлана кĕнĕ.

Çапла, Оринин территори пайĕнчи ялсенчи çынсем ĕçре те, спорт мероприятийĕсенче те – малтисен ретĕнче. Кунпа пĕрлех вĕсем юрă-ташăра та маттур. Ял кунĕсем, Çимĕк уявĕ вырăнти культура ĕçченĕсем активлă хутшăннипе епле çӳллĕ шайра иртеççĕ. Орининти халăх театрĕ хăй мĕне тăрать. Сăмах май, театр кăçалхи ноябрь уйăхĕнче хăйĕн 105 çулне паллă тума хатĕрленет.



**Павел ИВАНОВ,**
**Мулкачкасси ялĕн старости:**

– Ял çыннисем мана хăйсен старости пулма шанчĕç. Икĕ çул ĕнтĕ çак тивĕçе пурнăçлатăп. Шанăçа вара тӳрре кăларас пулать. Пирĕн территори пайĕн пуçлăхĕ Валентина Юрьевна хăй питĕ активлă та пуçаруллă çын. Çавăнпа та пирĕн, старостăсен те, ăна пĕрлехи ĕçре май пур таран пулăшса пымалла тесе шутлатăп. Ялсенчи тĕрлĕ ыйтăва та пĕччен-иккĕн ниепле те татса пама май çук. Йышпа вара хальхи вăхăтра темĕн те тума пулать.

Хамăр пĕрле тăрăшнипех юлашки çулсенче пирĕн тăрăхри ялсенчи çынсен пурнăç условийĕсем лайăхланса пынине пурте куратпăр. Акă пирĕн ялта пурăнакансене шыв ыйтăвĕ вĕçĕм калаçтаратчĕ. Республика программине хутшăнса кăçал Центральная урамри шыв башнине улăштарма май килчĕ.

Пирĕн ялта пурăнакансен çитес çулхи тĕллевĕсем те пĕчĕк мар. Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе ялти шыв сечĕсене çĕнетме май килет пулĕ тесе шухăшлатпăр. Кунсăр пуçне тата çапла майпах Уралеки урамĕнче çул юсама палăртатпăр. Хамăр тăрăшуллă та пĕр шухăшлă пулсан, пĕрлехи ыйтусене татса паратпăрах.

Татах тепĕр тĕллев вăл – ял патĕнчи плотинăна юсаса йĕркене кĕртесси. Çăлта, шахтăра юсав ĕçĕсем туса ирттерес пулать. Ĕçсене пурнăçлама проектпа смета докуменчĕсем хатĕрлесе территори пайĕ заявкăпа Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствине тухрĕ ĕнтĕ. Республика программине хутшăнса Чăваш Республикинчи Экологи культурин тата çут çанталăкпа тирпейлĕ усă курассин çулталăкĕнче çак ыйтăва та татса пама май пулĕ тесе шухăшлатăп.

**Владислав ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**